У84
Ч-46107

Геннадий Уткин

Денис Гордеев



Борис Борлен



Иван Егоров



Афиноген Кузьмин

Николай Евдокимов

Якур Иванч

УЛТĂ ПОРТРЕТ

Иккĕмĕш кĕнеке

Национальная библиотека ЧР
4-046107



К83.396(Чув)
У84

Геннадий УТКИН

УЛТĂ ПОРТРЕТ

Очерксем

Иккĕмĕш кĕнеке

Денис Гордеев
Борис Борлен
Иван Егоров
Афиноген Кузьмин
Николай Евдокимов
Якур Иванч

Шупашкар
"Çĕнĕ Вăхăт"
2013

83.3(2Рос-Чув)6-8 А/4
83.39(=Чув)6-8 А/4

УДК 821.512.111.0
ББК 83.3(2Рос.Чув)
У 84

Уткин Г.А.

Ултă портрет. Очерксем. Иккĕмĕш кĕнеке. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2013. – 32 с.

Геннадий Уткинăн «Ултă портрет» ятпа иккĕмĕш кĕнеки пичетрен тухать. Ăна вуласан пилĕк писателĕн ĕçĕ-пуçĕпе, пĕр йĕксĕк этемĕн йĕксĕкле пурнăçĕпе паллашма пулать (пур-ха хальлĕхе çавăн пек йĕксĕксем çĕр çинче). Хайлавсене Елизавета Пайминан «Пилĕк портрет» кĕнекинче хывнă традицисене асра тытса çырнă.

Проверено 27 МАР 2017

И-46107

Национальная библиотека Чувашской Республики

© Уткин Г.А., 2013

Татăклă сăмах

Райхаçат редакторĕ мана пысăках мар пӳлĕме илсе кĕчĕ те сĕтел хушшинче ларакан çынпа паллаштарчĕ: «Манăн çум, Денис Викторович Гордеев, санăн вăл ертсе пынипе ĕçлес пулать». Çакскер хăвăрт хускалса илчĕ, аллăма тытса чăмăртарĕ, ларма сĕнчĕ. Çапла эпир Денис Гордеевпа Комсомольски райхаçатĕнче пĕр пӳлĕмре ĕçлеме пуçларăмăр.

Редакци йывăç çуртра вырнаçнăччĕ. 1965 çулта района çĕнĕрен йĕркеленĕ хыççăн Лаврентий Таллеров редактор çурта çĕнетнĕччĕ, пысăклатнăччĕ, хаçатçăсене ирĕккĕн ĕçлесе ларма лайăх майсем туса панăччĕ. Пирĕнпе юнашарах редакцин яваплă секретарĕ Виталий Шемекеев пĕчченех ларатчĕ, секретариатпа юнашарти пысăк пӳлĕмре ял хуçалăх тата çырусен пайĕсем вырнаçнăччĕ.

Денис Гордеев редакцин парти пурнăç пайне ертсе пыратчĕ, эпĕ – литсотрудник. «Октябрь ялавĕ» (халĕ «Каçал ен») хаçатăн иккĕмĕш страници еплерех пуласси пирĕнтен иксĕмĕртен килетчĕ. Денис Викторович ĕçе васкавлă та тĕплĕ тума юрататчĕ.

Редакцире эпĕ раштав уйăхĕн вĕçĕнче, Çĕнĕ çул умĕн, ĕçлеме тытăнтăм. Акă пӳлĕме Гордеев ир-ирех пырса кĕрет, телефонисткăна шăнкăравласа ăна çĕнĕ кун пуçланнă ятпа саламлать (ун чухне абонентсемпе телефонисткăсем урлă çеç çыхăнма май пулнă), тепĕр самантран колхозăн партком секретарĕпе сăмахлама пуçлать. Ыйтса пĕлесси, тĕпчесси нумая пымасть. Денис Викторович часах чернил кĕленчи умне ларать, ал айне ятарласа касса-хатĕрленĕ хут хурать, пĕр тикĕс, хăвăрт çырать. Парти пурнăçĕн ыйтăвĕсемпе редакцие çырусем питĕ сахал килетчĕç, ирĕксĕрех телефон умне ларма тиветчĕ.

Çырса пĕтерсенех Гордеев хăвăрт тумланса райцентра тухса каятчĕ. Вăл çынсемпе тĕл пулса калаçма питĕ

ухатаччĕ, предприятисемпе организацисенче час-часах пулатчĕ. Çапла 1968 çулхи çуркунне çитрĕ, çăва тухрăмăр. Çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче Денис Викторовича парти райкомĕ Горькири (халĕ Чул хула) парти аслă шкулне вĕренме яма йышăнни çинчен пĕлтĕмĕр.

Гордеевăн аслă пĕлӳ пурччĕ ĕнтĕ, вăл Чăваш патшалăх пединститучĕн филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнăччĕ, чĕлхепе литература учителĕн специальноçне алла илсе пĕр вăхăт хăйсен ялĕнчи – Асанкассинчи – шкулта ĕçленĕччĕ. Комсомольски сали те уншăн ют марччĕ, кунти райхаçат редакцийĕнче вăл виçĕ-тăватă çул яваплă секретарьте тата редактор çумĕнче ĕçлеме ал çитернĕччĕ, авланса çемьеллĕ пулма та ĕлкĕрнĕччĕ. Денис Викторович мăшăрĕ Валентина Захаровна, райцентрта судьяра ĕçленĕ Захар Краснов хĕрĕ, йышлă кантурсенчен пĕринче çыруçăра тăрмашатчĕ, вĕсен ача садне çӳрекен икĕ хĕр – Светланăпа Алена – пурччĕ.

Çав çулхи нарăс уйăхĕнче парти райкомĕпе райĕçтăвком кирпĕчрен туса лартнă виçĕ хутлă çурта куçрĕç. Шупашкар строителĕсем çак объектпа пĕрлех икĕ хутлă, вун икĕ хваттерлĕ пурăнмалли çурт çĕклерĕç. Райцентрти çамрăк чиновниксемпе пĕрле унта райхаçатра ĕçлекен виçĕ сотрудникĕн çемйи пурăнма куçрĕ. Çавна май Гордеев кил-йышĕ те хваттерлĕ пулчĕ.

Партин аслă шкулне вĕренме кайма хатĕрленекен Денис Викторовичăн вĕт-шакăр ача-пăчаллă мăшăрĕ Валентина Захаровна çĕнĕ хваттерте хăй тĕллĕн юлас темерĕ пулмалла, уйрăм хуçалăхпа пурăнакан амăшĕн килне куçма шут тытрĕ. Уйрăм çуртра хĕлле ăшăнса пурăнма икĕ-виçĕ машина вутă кирлĕ. Вутă ыйтăвне татса пама эпир Денис Викторовичпа Мăрат лесничествине тухса кайрăмăр. Хатĕр вутă Йĕпреç районне кĕрекен Ирçе Çармăс обходĕнче çеç пур-мĕн. Ку пире çырлахтарчĕ. Мăрат колхозĕнче автомашина та тупăнчĕ. Хатĕр йывăçа хăвăрт тиесе лартрăмăр та Комсомольски енне çула тухрăмăр. Машина кабининче

пассажир валли пĕр вырăн çеç. Гордеев кабинăра пыма килĕшмерĕ, манпа пĕрле кузовра ларса пычĕ.

Пирĕн редактор Лаврентий Таллеров хаçат йĕритавра илемлĕ литература енне туртăнакан çамрăксене илĕштерме тăрăшатчĕ. «Октябрь ялавĕ» хаçатра ун чухне Денис Гордеевсăр пуçне Виталий Шемекеев, Петĕр Эревет, Алексей Зайцев ĕçленĕ. Литература страници уйăхра пĕрре тухса тăнă. Асăннă çамрăксем пурте унта хăйсен сăвви-калавне пичетлеме тăрăшнă. Пысăкрах хайлавсем уйрăммăн та тухнă. Вĕренме кайиччен кăшт çеç маларах «Октябрь ялавĕнче» Денис Гордеев «Грамота парăр» сатира калавĕ кăларчĕ. Унта вăл грамота илесшĕн хыпăнакан пĕр хĕрарăмăн сăнарне уçса панăччĕ. Хаçат пичетленсе тухнă хыççăн тепĕр кунах редакцие райцентрти кантурсенчен пĕринче ĕçлекен чăваш хĕрарăмĕ пырса кĕчĕ, пирĕн пӳлĕмре ятлаçа пуçларĕ: «Хамран мăшкăллаттармастăп, суда паратăп!» – тет хайхискер. «Ку сăмаха урăх никама та ан кала, атту калав героини эсĕ тесе ят сарăлма пултарать, вара намăсран ниепле те хăтăлаймăн», – тесе лăплантарса кăларса ячĕ ăна Денис Викторович.

Денис Гордеев пурнăçа сăнама, тĕпчеме юрататчĕ. Хайла-вĕсенче сăнарсем тĕрĕс ӳкерчĕклĕ, ĕненмелле пулса тухатчĕç.

Горький хулинче Гордеев икĕ çул вĕренчĕ. Партин аслă шкулне пĕтерсе тухнă 1970 çулта пирĕн хаçатăн редакторĕ улшăннăччĕ ĕнтĕ, Лаврентий Таллеров Шупашкара ĕçлеме куçнăччĕ.

Таврăннă-таврăнманах Денис Викторович редакцие кĕрсе тухрĕ. «Райкомра ĕç сĕнеймерĕç-ха. Райпо председателĕ туса хурасшăн. Суту-илӳре ĕçлемен, килĕшмерĕм. Парти обкомĕ Муркаш районне хаçат редакторне ярасшăн. Çакăн пирки шухăшласа пăхма юрать», – терĕ пире Гордеев.

Муркашра ун чухне редакторсем час-часах улшăнса тăратчĕç. Редакци коллективне Петр Палăч текен

журналист питĕ хытă пăтрататчĕ, çăхав çырса редакторсен тинкине илетчĕ. Денис Гордеев Петр Палăчран хăраса тăмарĕ, Муркаш район хаçачĕн редакторĕ пулма килĕшрĕ, кил-йышĕпе пĕрле çĕнĕ ĕç вырăнне куçса кайрĕ.

Вăл вăхăтра эпĕ тăваттăмĕш çул редактор çумĕнче ĕçлеттĕм. Пирĕн редакциe район хаçачĕсем пурте пырса тăратчĕç. Поч-та килсенех эпир, «Октябрь ялавĕнче» ĕçлекенсем, Муркаш район хаçатне алла тытаттăмăр, Денис Гордеев епле ĕçленипе кăсăкланаттăмăр. Муркашсен хаçачĕ кĕске вăхăтрах чап çĕнсе илчĕ, конкурсра темиçе хутчен те малти вырăнсене йышăнчĕ.

Тепĕр кĕркунне эпĕ те партин аслă шкулне вĕренме кĕтĕм. 1973 çул вĕçĕнче Денис Гордеев та Горькие квалификацие ӳстермелли курса пычĕ. Ун чухне вăл Муркашра виççĕмĕш çул ĕçлетчĕ. Курсра вĕреннĕ чухне эпир унпа тĕл пулсах тăтăмăр. Пĕррехинче Муркашран вăл савăнăçлă хыпар илчĕ, унăн мăшăрĕ Валентина Захаровна ывăл çуратнă-мĕн. Денис Викторович виçесĕр савăнчĕ.

Çак тапхăрта Гордеев прозăпа тата поэзипе çине тăрсах ĕçлеме пикеннĕ. 1974 çулта ăна Чăваш кĕнеке издательствин директорне лартрĕç. 1975 çулхи çулла эпĕ те пĕр вăхăтрах Горькири парти шкулĕнчен тата Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухрăм, Комсомольскинчи район хаçатĕнче редакторта ĕçлеме пуçларăм.

Юпа уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн ентеш Куçма Турхан писатель çуралнăранпа 60 çул çитрĕ. Района Турханпа пĕрле Денис Гордеев, Хветĕр Агивер, Геннадий Мальцев, Гурий Чаржов килсе çитрĕç. Турхан юбилейĕ ячĕпе районта литература эрни пуçланчĕ. Писательсем пилĕк кунра вун икĕ коллективра пулчĕç, райцентрти культура çуртĕнче Комсомольски ялĕн çыннисемпе тĕл пулчĕç.

Пурнăç – хытти, çăкăр – çемçи теççĕ чăвашсем. Денис Викторовичăн та пурнăç çулĕ пĕр тикĕс пулмарĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн сакăр вуннăмĕш çулĕсенче вăл «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçатра та, Чăваш телекуравĕнче те, Писательсен союзĕнче те, литература фондĕнче те ĕçлесе пиçĕхрĕ. Должноçĕсем пысăк е пĕчĕк пулчĕç-и – ун пирки сăмахлас йӳтĕмĕм çук, литературăри пултарулăхĕ, таланчĕ унăн ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ.

Пирвайхи сăввисем район хаçатĕнче 1955 çултах пичетленме тытăннă, 1957 çулта «Çеçпĕл çеçкисем» кĕнекере темиçе сăвă çапăнса тухнă. «Ăшă çумăр» ятпа сăвăсен пуххи 1975 çулта кун çути курнă. Çак тапхăртан пуçласа Д.Гордеевăн проза кĕнекисем пичетленме тытăннă. 1981 çулта вулакансен аллине «Ир такăнсан» кĕнеке лекрĕ. Унччен маларах «Çеçен хир çилĕ» кĕнеке 10 пин экземплярпа çапăнса халăхра хăвăрт саланса пĕтрĕ. 1988 çулта тухнă «Куккуклă сехет» кĕнеке те лавкка çӳлĕкĕсем çинче тусан пуçтарса выртман, хăвăрт сутăнса пĕтрĕ. «Акман ыраш» (1991 ç.) кĕнекене те вулакансем кăсăкланса кĕтсе илчĕç.

Çĕнĕ тапхăрта Денис Викторовичăн вунă çула яхăн пĕр кĕнеке те тухмарĕ. Çырман, калеме алран пăрахнă тесе калас килмест манăн. Пысăк повеçсем çырнă, роман («Улăп тăпри») калăпланă теессĕм килет. Çĕнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче, 2000 çулта, унăн «Çурта кунĕ» кĕнеки тухрĕ, тата икĕ çултан (2002 ç.). «Çич çунатлă курак» «вĕçсе» килчĕ, «Хуп хушшинчи çылăх», «Пăсташ» кĕнекесем те кĕттермерĕç. Наци библиотеки çулсерен ирттерекен конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе 2003 çулта Д.Гордеевăн «Çич çунатлă курак» кĕнеки «Чи вуланакан кĕнеке» ята çĕнсе илнĕ, «Хуп хушшинчи çылăх», «Пăсташ» кĕнекисем те конкурсра çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă.

Денис Викторович хăйĕн тĕслĕхĕпе кил-йышне хавхалантарса, çĕклентерсе пырать. Мăшăрĕ хĕрĕх çултан иртсен аслă шкула вĕренме кĕрсе ăна ăнăçлă пĕтерсе тухрĕ, вăтăр çула яхăн «Пĕлӳ» обществăн республикăри организацийĕн яваплă вырăнĕнче тимлерĕ. Хĕрĕ Светлана ашшĕ пекех писатель, вырăсла çырать, массăллă

информаци хатĕрĕсенче хастар ĕçлет, Раççей Писательсен союзĕн членĕ.

Денис Гордеев – ЧР Профессионал писательсен союзĕн правленийĕн членĕ, Чăваш халăх писателĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, тĕрлĕ преми лауреачĕ.

1988 çулхи çĕртме уйăхĕн шăрăх кунĕ час-часах асăма килет. Çав уйăх пуçламăшĕнче Денис Викторович Гордеев 50 çул тултарчĕ. Райцентрти библиотека умĕнче эпĕ унпа ăнсăртран тĕл пултăм. Библиотекăра ĕçлекенсемпе Асанкассине юбилей паллă тума каясшăнмĕн. Мана та унта пыма чĕнчĕç, килĕшрĕм. Мана чи малтанах юбиляра чыслама Шупашкартан пĕр писатель те килменни тĕлĕнтерчĕ. Эй, пĕр тесен, мĕн тĕлĕнмелли пур? Хирĕçсе, пĕр-пĕрне чавсапа тĕксе пушанаймаççĕçке чăваш çыравçисем! Укçа паман çĕре тухса çÿреме те юратсах каймаççĕ.

Çитрĕмĕр. Денис Викторовича лайăх кĕтсе илчĕç Асанкассисем. Ялти шкул вĕрентекенĕсем, культура çурчĕн ĕçченĕсем, райцентрти библиотекарьсем хытă тăрăшрĕç. Ял халăхĕ хăйĕн ентешне хапăл туни каça лайăх ирттерме май пачĕ.

Кăçал Асанкассисем çĕртме уйăхĕн варринче чаплă ентешĕн 75 çулне паллă тăваççĕ: унта Шупашкарсем пуласса, юбилей нихçанхинчен те лайăх иртессе шанас килет.

Çын çĕр çинчех çуралать

Тепĕр чух кĕнеке ячĕ унăн содержанине вулинченех яр уççăн кăтартса парать. Чăвашсен паллă сăвăçи Борис Борленăн 2010 çул вĕçĕнче Шупашкарти «Çĕнĕ Вăхăт» издательствăра 300 экземплярпа тухнă 103 страницăллă кĕнекине «Сăмахăм самана çинчен» ят панă. Апла пулсан ку кĕнеке юлашки вăхăтра йĕркеленнĕ власть тытăмĕ, çĕр-шыври çынсем, вĕсен йăли-йĕрки, пурнăç хыттипе çемçи çинчен. Унччен тухнă кĕнекисене вуланисем поэзире авторăн гражданла позицийĕ çирĕп пулнине лайăхах чухлаççĕ ĕнтĕ. Борис Леонтьевич çырнă сăвă кĕнекисем сахал мар. Юлашки вун пилĕк-çирĕм çул хушшинче çеç тĕрлĕ издательствăсенче унăн «Пăрттас патшапа чăваш Турханĕ», «Кам мĕншĕн уйрăлать», «Кĕсменсем тăкаççĕ кĕмĕл», «Саламлама явмаççĕ саламат», «Паянхи кулăм-курăм», «Вирлĕ-витлĕ сăвăсем», «Çĕр хуçи-ши эс, Хĕветĕр?», «Пирĕн çулталăк», «Хаваслă паллашу», «Анаталла-тăвалла, ăçталла çул тытмалла» тата ытти кĕнекисем пичетленсе тухрĕç.

Çырма вăл студент чухнех (1951–1955 çулсем), хăй Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче историпе филологи факультетĕнче вĕреннĕ вăхăтра пуçланă. Унăн сăввисем «Ялав» журналта, «Коммунизм ялавĕ» хаçатсенче пичетленнĕ. Борис Леонтьевичăн пурнăç опычĕ те самаях пысăк. Вăл Чăваш Республикине 1994 çулта каялла таврăниччен Пушкăртстанри Авăркас районĕнчи чăваш ялĕсенчи шкулсенче, Стерлитамакри вĕренӳ заведенийĕсенче ĕçленĕ, Пелепейре тухса тăракан «Урал сасси» ятлă чăваш хаçатĕнче ятарлă корреспондент, Хусанти «Сувар» хаçатра редактор çумĕ пулнă. Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче вăл Хусанти патшалăх педагогика институтĕнче чăваш чĕлхипе литература уйрăмне уçас енĕпе пуçару тăвать. 60 çул çитсе пенсие тухсан çеç Борлен çемйипе Шупашкара килсе тĕпленет, литература ани çинче пусăрăнсах ĕçлет.

Малалла сăмахăм çĕнĕ кĕнеке пирки. Темисене кура ăна çичĕ пайран тăрать теме пулать. Унта пурĕ 100 ытла сăвă. Пĕрремĕш пайне «Шанчăк пулсан çын – паттăр» ят панă.

Паллă ĕнтĕ, пурнăç кукрашки-макрашкисем иртнĕ çулсенче хăш-пĕр çынсене аптратсах çитернĕ. Обществăра тĕп «хуçа» укçа пулса тăчĕ. Кăмăл-сипет, евĕклĕх, этемшĕн этем тус, тăван тени кайри вырăна тăрса юлчĕç. Этемре этемлĕх пĕтмен, çак йывăр лару-тăруран вăл тухатех, аталану çулĕ тупатех, тет поэт хăйĕн «Хăтăлатпăр пурпĕрех» сăввинче. Ку пайра пысăк шанчăкпа, оптимистла кăмăл-туйăмпа çырнă сăвăсем чылай. «Пур-и, пурнăç тупсăмĕ?» – ыйтать сăвăç. Хăех çапла хуравлать:

Пурнăç тупсăмĕ ансат:
Лавçă шанчăклă пулсан,
Турă пулăшсан пире
Çитĕпĕр çитес çĕре.

«Тăнăçлăх çеç çăлăнăç кӳрет», «Пурăнасчĕ туслă, тăванла» сăвăсен лирикăлла геройĕ те мал ĕмĕтлĕ, йывăрлăхсене çĕнтересле вăй-халлă.

Анчах та пурте ун пек мар-çке-ха. Тĕпрен илсен, поэтăн çĕнĕ кĕнекинче сатира çулăмĕ нихçанхинчен те ытларах ялкăшать. Тĕрлĕ йăх-яха, наян-юлхава, укçапа пурлăха сăптăрма хĕрĕнекенсене, намăс-симĕсе çухатса пурăнакансене, ясарлăх лачакине путнă этемккесене кӳренсе, тарăхса, хаяр çилĕпе питлет сăвăç. Çакна каламалла: çав этемккенсен тӳрленес шанăçĕ пачах та çук поэтшăн. Вĕсем общество каяшĕ вырăнне тăрса юлни пирки пĕрре те иккĕленмест автор. Вуласа пăхар-ха:

Ма урăм-сурăм пурнăçра
Ултавçăсем нумайтарах,
Çынна ура хура-хура
Пухаççĕ пурлăх мăй таран.
(«Камсем паян нумайтарах?»)

Е тата:

Çĕр тенкĕлĕх сĕтев илместĕп,
Пин тенкĕ те тивĕçтермест.
Çĕр пин... Мĕн тăвасса пĕлместĕп,
Парсассăн – паччăр «Мерседес».
(«Çĕр пин ăна тивĕçтермест»)

Ку саманара коллективлăх тени пĕтрĕ. Çын пĕччене юлчĕ. Ăна хĕрхенекен те, пулăшакан та çук.

Çăмăл мар çав ватăлсан,
Тус-тăван сана мансан,
Пурпĕрех çак пурнăçран
Вăхăтсăр ан татăлсам.
Ху укçасăр тăк – ан шан
Пулăшать тесе тăван.
(«Ан шан»)

Çак ирсĕр-сумсăр пурнăç кам еккипе пулса пынине те пытармасăр уçса парать сăвăсен авторĕ. Вăл – власть тытăмĕ, Синкерлĕ Самана тĕтринче çынсен сăнĕсем те сапăрланса курăнаççĕ, юрăхсăрлăх пурăнçа çиет, нишлĕх ĕмĕте хуплать. Çĕр çине килекен çĕнĕ ăрăвăн пуласлăхĕ тĕтреллĕ.

Шкула та çуран
Кайса вăл курман,
Ирех ун валли
Çитет «Жигули».
Пирус тĕтĕрме
Ĕçме, иртĕхме
Вĕренчĕ часах,
Пулмарĕ чарса.
(«Пысăк пуçлăх ывăлĕ»)

Паянхи имсĕр-юмсăр этемккесем (вĕсем çĕр-шывра талккăшĕпех хупăрласа илеймен-ха, çĕр çинче лайăх çынсем ытларах) – ĕнерхи атте-аннен пепкисем. Пĕлĕтрен нимĕн те татăлса ӳкмест. Çын çĕр çинчех çуралса çитĕнет, пурăнать, вилет. Ĕнерхи «çветтуйсен» ачисем обществăна юрăхсăр пулса çитĕннишĕн çав «çветтуйсем» хăйсем те айăплă. Тимлесе пăхар-ха: ĕнер тĕпкомсемпе

ĕçтăвкомсенче, обкомсенче тата райкомсенче ларнисем паян парламетсенче, президент структурине кĕрекен органсенче вырăн тупнă. Хăшне-пĕрне, ватăлса çитнисене, ун пек пукансем çинче ларма шалкăм çапни анчах чăрмантарать. Ун пеккисем чыслă та тупăшлă вырăнсене, апат «валашки» сывăхне, ывăл-хĕрне лартса тăраççĕ. Çапла йĕркеленчĕ пурнăçăн çырман саккунĕ. Борис Борлен хăйĕн çĕнĕ кĕнекинче çакна пĕтĕмпех поэзи чĕлхипе, сатира мелĕпе уçса парать. Акă мĕншĕн çĕнĕ кĕнекене «тулли тĕшĕллĕ» тесе хаклама пултаратпăр, çак сăмахсемшĕн пире пĕр вулакан та ултавçă тесе каламĕ.

Борис Борленăн хальхаççăн çырнă çĕнĕ сăввисене вуласа хак панă май тӳрех çакна каламалла: хăйĕн пултарулăхĕнче тепĕр пысăк пусăма çĕкленчĕ, унăн сасси тата та çирĕпленчĕ, сăнарсен уçăмлăхĕ пысăкланчĕ, меслетсен майĕсен çĕнĕлĕхĕ яр уççăн курăнма пуçларĕ. Борлен поэзийĕ, тĕпрен илсен, – питлевлĕ, сивлевлĕ (анчах та сивлеклĕ мар), тиркевлĕ поэзи. Илемлĕ сăнарлăх мелĕсемпе ирĕккĕн усă курса вăл этемре пытарăнса тăракан е пачах та пытарăнмасăр курăнакан юрăхсăрлăха питлет, тиркет, сивлет, çын çав юрăхсăрлăхсенчен (ĕмĕтсĕрлĕх, кĕвĕçӳлĕх, харам пырлăх, сĕмсĕрлĕх, ясарлăх) хăтăлсан çеç çын пулма пултарать тенине кăтартса парать. Б.Борленăн сăввисене граждан лирикин ырă тĕслĕхĕсем тесе хак пама пулать. Поэт хăй тытнă çул-йĕртен пăрăнмасăр самана синкерлĕхĕпе çынри киревсĕрлĕхе питлессине сăвăран сăвва, кĕнекерен кĕнекене çĕнĕ сăрăсем хушса, çав сăрăсен килĕшӳлĕхне тупса туса пырать. Çиелтен пăхсан поэт этемĕн çĕр çинчи вырăнĕ пирки шанчăкне çухатнă теме те пулать. «Ухмах çуратнă ухмаха, пуçтах ӳстернĕ пуçтаха» («Эткерлĕх»), – тет сăвăç. «Тапăнаççĕ пĕр-пĕрне, хăратмасть çынна тĕрме» («Кам кама тăрантарать»), – çирĕплетет вăл тепĕр сăввинче.

Поэта çын тени çын хыççăн кайни, обществăпа политикăри пулăмсене пуç тавра шухăшласа хак пама пĕлменни тарăхтарать, унăн кăмăлне хуçать:

Кăчăк туртрĕç тĕк – пыратпăр,
Хушрĕç тĕк – тем те тăватпăр,
Тĕпсĕр шăтăка анатпăр,
Чĕрĕ юлтăмăр тăк – паттăр.
(«Пуç тайма хăнăхсан»)

Ку темăсене хускатнă чухне сăвăç иронипе, сарказмпа пĕлсе усă курать:

Тавçăруллă пулмалла,
Хушнă пек юрламалла, –

тет вăл тепĕр сăввинче («Малалла çул хывмалла»).

Пире суя-ултавăн кукăр-макăр çулĕпе илсе пыракан «çул пуçсем» пĕлĕт çинчен анманни, хамăр хушăрах ӳссе çитĕнсе çын пулни пирки те сăвăç ахаль сăмахсемпе ăнлантарса пама тăрăшать.

Тертлĕ пурнăç хушнăран
Тухнă хамăр хушăран
«Кирлĕ çын», тӳре-шара,
Кантурта ăна шыра.
(«Тухнă хамăр хушăран»)

Поэт лайăххи, пархатарли çиеле тухасса шанать.

Хамăр çĕршывра хамăр пек çӳрер,
Хамăра кура савăнма пĕлер, –

тет сăвăç.

Ырă шухăшлă этем
Пурнăçа кӳрет илем, –

мухтать вăл йышлă сăввисенчен пĕринче çынна.

«Анаталла-тăвалла... ăçталла çул тытмалла?» ят панă сăвăç хăйĕн сатирăпа юмор кĕнекине.

Борис Борлен нумай вăхăт хушши сахăр чирĕпе асапланса, сулахай урине таттарса кăçалхи (2013 çул) çăвăн (майăн) 13-мĕшĕнче вилчĕ. Ăна хăй çуралса ӳснĕ Елчĕк районĕнчи Кивĕ Арланкасси масарĕнче пытарнă.

Сăнĕпе те, чунĕпе те çамрăк

«Кун-çулсем пыраççĕ шăхăрсах, патька», – çырнă хăйĕн пĕр сăввинче Митта Ваçлейĕ. Калама çук тĕрĕс сăмахсем. Хăш-пĕр ĕç-пуç ĕнер кăна пулса иртнĕ пек, анчах унтанпа 30 çул хыçа юлнă-мĕн. Акă эпĕ чăваш прозаикĕпе Иван Егоровпа паллашнăранпа кăçал кĕркунне 45 çул çитет.

Шупашкарта район хаçачĕсен литсотрудникĕсен пĕр уйăхлăх семинарĕнче вĕренетĕп. Занятисене манпа пĕрле Кӳкеçри «Ленинец» хаçатăн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Геннадий Мальцев та çӳрет. Пĕррехинче вăл мана Ленин проспектĕнчи 4-мĕш çуртра вырнаçнă Чăваш кĕнеке издательствине ертсе кайрĕ. «Михаил Сениэль патне кĕретпĕр», – терĕ вăл тӳрех. Çав вăхăтчен Сениэле пĕрре те курманччĕ эпĕ. Ун çинчен «Тăван Атăл» журналта Стихван Шавли çырнă «Вăрман айĕнче, Саврăшпуçĕнче» статьяра вуласа тĕлĕннĕччĕ. Тутарстанри Аксу районĕнчи Саврăшпуç ачи-мĕн Михаил Павлович Егоров-Сениэль.

Кĕтĕмĕр. Пӳлĕмре вăл пĕччен мар. Хăйĕнчен те çамрăкрах йĕкĕтсем виççĕн-тăваттăн. «Петр Димитриев, Серафим Ефимов, манăн шăллăм Ваня Егоров», – çамрăксемпе паллаштарчĕ Михаил Сениэль.

Халĕ вĕсем пурте паллă çынсем. Вăл вăхăтра Петр Димитриев издательствăра редакторта тин çеç ĕçлеме пуçланă çамрăк сăвăçчĕ. Каярахпа вăл Эйзин псевдонимпа хаçат-журналта тарăн шухăшлă, хăйне евĕрлĕ сăвă-поэма пичетлеме пуçларĕ, темиçе кĕнеке кăларчĕ. Серафим Ефимов Йĕпреç район хаçачĕн редакторĕнче 30 çула яхăн ĕçлерĕ, унăн пуçарăвĕпе райцентрта редакципе типографин икĕ хутлă çурчĕ çĕкленчĕ, Серафим Ефимовича ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ятне пачĕç. Сениэлĕн шăллĕ Иван Егоров та Петр Димитриевпа тата Серафим Ефимовпа Красноармейски районĕн хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ.

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче Иван Егоров 70 çул тултарчĕ. Тăван литература аниче çур ĕмĕре яхăн ĕçлесе вăл ăста писатель пулнине кăтартрĕ. Иван Егоровăн ачалăхĕ хаяр вăрçă хыççăнхи вăхăтра иртнĕ. Йышлă çемьере тăраниччен çăкăр çини те телей шутланнă. Ялти шкултан вĕренсе тухнипе çеç çырлахман вăл – 25 çухрăмри райцентрти вăтам шкулта ăс пухнă. Унтан ăнăçлă вĕренсе тухнă хыççăн Чистайри ремесла училищинче пăрахутсем çинче ĕçлекен рулевой специальноçне алла илнĕ, Атăлпа Чулман Атăл (Кама) анлăшĕнче теплоход çинче виçĕ çула яхăн ĕçленĕ. Тепĕр виçĕ çулĕ совет çарĕнче иртнĕ, Иван Егоров салтакран кĕçĕн лейтенант пулса таврăннă.

Иван Егоровăн пĕрремĕш кĕнеки, «Лайăх ача» ятлăскер, манăн алла лекмен (1976), унта мĕн çинчен çырнине пĕлместĕп. 1977 çулта тухнă «Виçĕ чарлан» кĕнекене çийĕнчех вулама май килчĕ. Килĕшрĕ. Тĕп герой – ман пекех район хаçачĕн редакцийĕн çынни, ытти сăнар та чуна çывăх. Кĕнекене тепре, тата тепре те вуларăм. Автор прозăра пурнăç чăнлăхне пăсмасăр, çав вăхăтрах илемлĕ мелсемпе пĕлсе усă курса ĕçлени кăмăла кайрĕ. Иван Егоров çырнин автобиографилĕхĕ те кăмăла кайрĕ. Красноармейскинчи «Сельхозтехникăра» УАЗ моторĕсене юсатчĕç. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен варринче мотор юсас йӳтĕмпе манăн çав салара пулма темиçе хутчен тӳр килчĕ. «Виçĕ чарланри» калавсен сюжечĕсене эпĕ манманччĕ-ха. Салари культура çурчĕ чăнах та мунча евĕрлĕ-и-ха, район хаçачĕн редакцийĕ халĕ те темиçе хут юсанă йывăç çуртрах-ши тесе пăхса çӳрерĕм. Çав çулсенче мана райхаçат редакторне çирĕплетрĕç. Иван Егоровăн «Виçĕ чарланĕнче» райхаçат редакторĕ кашни кун пуйăспа Канаш хулинчен Трак станцине (Красноармейски сали) çӳрет. Кăмăллă мар ку. Çавна ас туса эпĕ хам ĕçлекен райцентрта хваттер уйăрма тӳрех ыйтрăм. Çапла воспитани параççĕ вулакана илемлĕ произведенисенчи шухăшсем!

70-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Иван Егоров Шупашкара куçса килсе Чапаев ячĕллĕ заводра ĕçленĕ. Кайран-

рах вăл «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçатра, Чăваш кĕнеке издательствинче, культура министерствин РНМЦ (республикăри наукăпа методика центрĕ) текен учрежденире вăй хунă.

2003 çулта Иван Егоровăн «Усал хыпар» кĕнеки тухрĕ. Ăна Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ кăларнă. Тиражĕ – 500 экземпляр. Райцентрсемпе чăваш ялĕсенче хальхи вăхăтра 500 ытла тĕслĕх библиотека ĕçлет. Хăш-пĕр чăваш ялĕнчи библиотекăра Иван Егоров çырнă «Усал хыпар» кĕнеке çук. Питех те шел! Этем çĕр çинче пурăннин тупсăмĕ пирки шухăша кайса çырнă çак кĕнеке пин-пин çынна кăсăклантарĕччĕ, пурăнма хăват парĕччĕ.

Хĕнпе пулсан та Чăваш кĕнеке издательствинче иртнĕ ĕмĕрĕн 70-80-мĕш çулĕсенче Иван Егоровăн кашни вунă çулта икĕ-виçĕ кĕнеке тухкаланă. Çырасса вăл тăватăпилĕк кĕнекелĕх те çырнă, лăпкă та ырă кăмăллă çыравçă чавсапа хирсе хăйсем валли çул уçса пыракан хивре писательсене çĕнтерме пултарайман. Çав çулсенче унăн «Инçет кăваклăхĕ» (1980), «Ашшĕпе ывăлĕ» (1984), «Шур перчетке» (1989) тата «Куç çути» (1992) кĕнекесем тухнă.

«Пĕр вăхăтра тĕрлĕ йăх-яха пула чăваш литератури пĕтсех çитрĕ темелле, – аса илчĕ кун пирки Иван Егоров. – Çавăн йышшисем компартие йышлăн кĕрсе кайса шалтан аркатрĕç».

Иван Егоров шав ĕçлет, çырать, вăхăт синкерлĕхне хут çине ӳкерсе сăнлать. Кĕнекисем тĕрлĕ издательствăра (Чăваш кĕнеке издательствинче мар) пичетленеççĕ текен сас-хура çӳрет. «Тĕтреллĕ Лондон» романĕ кун çути курнă, «Çут тĕнче» романăн виçĕ кĕнекине те çырса пĕтернĕ.

Иван Егоров халĕ тивĕçлĕ канура. Пенсийĕ пысăк мар, çапах вăл çулланнă çынна выçă ларма памасть, ĕçлеме хистет. Терт-нушана, йывăр чирсене чăтса ирттерчĕ пулсан та Иван Павлович сăнран ватăлмарĕ, çамрăк вашаватлăха çухатмарĕ, яш чухнехи чун-чĕре вăй-хăватне чакармарĕ.

Амăшĕн арчи

Афиноген Иванович тăван çĕр-шывăн чи çурçĕрти хулисенче нумай çул пурăннă та унпа тĕл пулма чăннипех те çăмăл марччĕ. Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн çеç Мускавра тĕпленнĕ, вара Шупашкара та час-часах килсе çӳреме пуçларĕ. Унччен вăрах вăхăт Камчаткăри, Магаданри педагогика институчĕсенче студентсене вырăс литератури вĕрентнĕ.

Эпĕ ăна 1995 çулхи çу уйăхĕн варринче Чăваш академи драма театрĕ умĕнче курнăччĕ. Çав кун писательсемпе культура ĕçченĕсем Константин Иванов çуралнăранпа 105 çул çитнине паллă тума унăн палăкĕ патне пуçтарăннăччĕ. Писательсене пурне те тенĕ пекех палласа-пĕлсе тăратпăр, анчах хальхинче ушкăнра халĕччен курман çын та пур. Константин Петров прозаикран: «Кам пулчĕ-ха ку çын?» – тесе ыйтрăм. «Афиноген Кузьмин. Писатель. Филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ. Доцент. Ĕлĕкрех Шупашкарта наукăпа тĕпчев институтĕнче те ĕçленĕ. Халĕ Мускавра пурăнать», – хуравларĕ Константин Константинович.

Университетра вĕреннĕ вăхăтра Кузьмин хушаматлă авторăн «Художественная проза Эльгера» кĕнекине тишкерсе икĕ хутчен вуланине аса илтĕм. Питĕ кăсăклантарнăччĕ мана хут хуплашкаллă самаях хулăн çав кĕнеке. Эпĕ ăна лавккасенче шырарăм. Тупрăм, туянтăм. Хĕрĕх çул ытла упранать вăл манăн килти библиотекăра.

1995 çулта Афиноген Ивановичпа тĕл пулма тӳр килчĕ. Вăл çулсенче Шупашкарта Республика кунне анлăн паллă тăвасси йăлана кĕчĕ. Çĕртме уйăхĕн çав кунĕнче эпĕ те уява хутшăнтăм. Пыратăп çапла Ехрем хуçа çурчĕ умĕпе. Урамри сĕтел хушшинче иккĕн лараççĕ. Пĕри – Ваçлей Давыдов-Анатри сăвăç-юрăç, тепри – Афиноген Кузьмин писатель-литературовед. Ваçлей Давыдов-Анатри мана, сĕтел сывăхĕнчен иртсе

У-46207
Национальная библиотека Чувашской Республики

пыраканскере, чĕнчĕ. Калаçса кайрăмăр. Сехет çурăикĕ сехет шакăлтатса лартăмăр çапла. Василий Ивановичпа Афиноген Иванович чăваш литератури пирки сăмах вакларĕç, эпĕ итлерĕм.

Çавăнтанпа çирĕпленсе пычĕç те ĕнтĕ пирĕн çыхăнусем. А.Кузьмин Шупашкара килнĕ-килмен Юрий Сементер сăвăç патĕнче чарăнатчĕ. Иккĕшĕ вĕсем çемьепе туслăччĕ. Çав туслăх халĕ те татăлман. Юрий Семеновичпа унăн мăшăрĕ Раиса Максимовна Афиноген Ивановича хапăлласа кĕтсе илеççĕ, ĕç тума пулăшаççĕ.

Ĕçĕ вара А.Кузьминăн сахал мар. Икĕ пинмĕш çулсен пуçламăшĕнче Афиноген Иванович Раççей Правительствинчен «Чуваши» кĕнеке çырма грант çĕнсе илчĕ. Тăрех ĕçе тытăнчĕ. Тĕп хулари тĕрлĕ отрасльте ĕçлекен ăсчахсемпе тĕл пулчĕ, библиотекăсемпе çыхăнчĕ, хаçат-журнал редакцийĕсене çăрерĕ. Пĕр сăмахпа, кĕнеке çырма литература пуçтарчĕ.

Афиноген Иванович 1928 çулхи утă уйăхĕн 10-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Ирçе ялĕнче вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă, ялти шкултан, Етĕрнери педагогика училищинчен, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен (халĕ университет) вĕренсе тухнă, М.В.Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университечĕн аспирантурине пĕтернĕ, иртнĕ ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенчех филологи енĕпе ăсчах пулса тăнă, Пăрачкаври педагогика училищинче (халĕ училище хупăннă) преподавательре те ĕçленĕ. Утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче Чăваш Республикинчи чĕлхе, литература, истори тата экономика ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн (халĕ гуманитари институчĕ) наука сотрудникĕ пулса тăрать. Афиноген Кузьмин чăваш литературине тĕпчесе чăвашла та, вырăсла та статьясем çырнă. Çав çулсенче вăл Çемен Элкерĕн, Василий Краснов-Аслин, Федор Павловăн, Илле Тăхтин, Леонид Агаковăн, Петĕр Хусанкайăн пултарулăхне тарăннăн тишкернĕ, çак авторсен кĕнекисен ум сăмахĕсене çырма ăна шаннă, вăл çырнă ĕççем наукăпа тĕпчев институчĕ

кăларакан кĕнекесенче пичетленнĕ. Афиноген Иванович пуçлăхсенчен: «Мĕн ĕçлеме хушатăр;» – тесе ыйтсатилмĕрсе çӳрекен ученăй пулман, вăл хăйĕн пуçарăвĕпе яваплăха туйса ĕçленĕ. Ăсчахăн çакăн евĕрлĕ йăлиерĕнки тĕпчев институчĕн хăш-пĕр пуçлăхĕн кăмăлне кайман, вĕсем Афиноген Ивановичăн кашни утăмне сăнама çын уйăрнă, ăна хĕсме тытăннă. Николай Иванович Ашмаринăн наукăпа тĕпчев институчĕн путвалĕнче выртакан 17 томлă сăмахсарне хут-хăмăра (макулатурăна) леçсе парасран сыхласа хăварнă хыççăн ку тата та вăйланнă. Ăсчах вара пуçлăх ячĕпе хăйне ĕçрен кăларма ыйтса çырнă та Çурçĕре тухса кайнă. Унăн ĕçĕ унта та ăннă. Çурçĕрти журналсенче унăн тĕпчев ĕçĕсем пичетленнĕ, çавăнтах вăл вырăсла çырнă хăйĕн калавĕсемпе повеçĕсене çапса кăларнă. Анчах Афиноген Кузьмин чăваш литературине тĕпчесси вăтăр çула яхăн чарăнса ларнă.

Ас тăватăп-ха: 2003 çулхи утă уйăхĕн варринче Афиноген Иванович 75 çул тултарнине Чăваш наци библиотекинче, Етĕрне районĕнчи ялсенче анлăн паллă турĕç. Юбилей каçĕсенче вулакан йышлă пулчĕ, чăваш писателĕсем 40-50 çынран кая мар хутшăнчĕç, «Ялав» тата «Тăван Атăл» журналсенче А.Кузьминăн çĕнĕ произведенийĕсем пичетленчĕç.

Юбилее паллă тунă хыççăнах Афиноген Иванович хăйĕн мăшăрĕпе Роза Ивановнăпа (Кузьмин пултарулăхĕнче унăн тӳпи те пысăк) Мускава тухса кайрĕ, унта пусăрăнсах Раççей Правительствин саккасне пурнăçлама, «Чуваши» кĕнекене çырма пуçăнчĕ. Икĕ-виçĕ çул тимлесех ĕçлерĕ. Ĕç ăнăçлă пулса тухрĕ. Кĕнекен ал çырăвне Мускавра та, Шупашкарта та писательсем, ăсчахсем пысăк хак пачĕç, улт çĕр страницăллă, ик çĕре яхăн сăн ӳкерчĕклĕ сулăмлă çав кĕнеке Шупашкарта виçĕ пин экземплярпа тухрĕ.

Тĕрлĕ издательствăра Афиноген Кузьминăн вунăвун пилĕк кĕнеке тухнă. Вăл тахçанах Писательсен

союзĕн членĕ пулмалли çын. Анчах вăл хăй 71 çул тултарнă хыççăн çеç Раççей Писателĕсен союзне кĕчĕ. Акă мĕн çырать çакăн пирки чăвашсен паллă писателĕ Владимир Кузьмин хăйĕн «Элкер çăлтăрлăхĕ» кĕнекинче. «Чăваш республикинчи писательсен союзĕн правленийĕн председателĕн çумĕ пулнă май мана çынсене писательсен союзне илес енĕпе документсем хатĕрлеме те тиветчĕ. Пĕррехинче Агивер председатель манăн сĕтел çине çĕтĕлсе пĕтнĕ папка хучĕ те çапла каларĕ: «Правленин çитес ларăвĕ валли документсем хатĕрлес пулать», – терĕ. Нумай вырттса тĕссĕрленнĕ хутсемпе паллашрăм. Афиноген Кузьмин Писательсен союзне илме çирĕм çул каяллах çырса панă-мĕн. Тĕрлĕ документран тăракан хулăн папка чунсăрлăхпа ирсĕрлĕх тусанĕпе хупланнă. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх – ун чухне правление ертсе пыракансем тавра яланах ура хума юратакан, кавар тума ăсталанса çитнĕ литераторсем карталанатчĕç, вĕсем талантлă авторсене çул памастчĕç.

Афиноген Кузьмин та çакăн пек лару-тăрăва лекнĕ пулмалла. Литературăри бюрократсемпе кĕрешес шухăш пулнă-ши унăн е пулман та-ши – пĕлместĕп.

...Кивелсе тĕссĕрленнĕ папка мана пăшăрхантарчĕ. Унти сĕнӳсем кивелнĕ, сĕнӳ паракансем те тахçанах вилнĕ ĕнтĕ. Федор Георгиевичпа эпир çĕнĕрен сĕнӳсем çыртăмăр, йышăну комиссийĕн ларăвне ирттертĕмĕр, правлени ларăвĕ те Афиноген Ивановича Писательсен союзĕн членне илме йышăнчĕ. Эпĕ мĕн пур документа хатĕрлерĕм те, Агивер Мускава тухса кайрĕ. Унта секретариат пирĕн йышăнăва çирĕплетнĕ. Федор Георгиевич тепĕр темиçе кунран Афиноген Ивановича союз членĕн билетне пачĕ».

2007 çулхи çулла Афиноген Кузьминран пысăк çыру илтĕм. Мускав хыпарĕсене пĕлтернисĕр пуçне шурă сухал мана яваплă ĕç те хушать. Шупашкарти ача-пăча спорт шкулĕсенчен пĕринче унăн пысăк йывăç арча упранать иккен. Шкул çуртĕнче юсав ĕçĕсем пуçланнă

май Кузьмин мана çав арчана тиесе тухма хушать, хулари библиотекăсенчен пĕринче вырнаçтарма ыйтать. Ĕçе пурнăçлама çав эрнерех укçа куçарчĕ. А.Кузьмин хушнине тĕплĕн пурнăçларăм, анчах çăрапа питĕрмен арчине уçса пăхмасăр чăтаймарăм. Арча виттине çĕклесенех тĕлĕнтĕм. Шалта кивĕ хаçатсемпе сарăхнă хутсемсĕр пуçне урăх нимĕн те çук. Афиноген Иванович Шупашкара тепре килсен çак арча пирки ыйтса пĕлмесĕр чăтаймарăм. Вăл Кузьмин амăшĕн арчи-мĕн. Амăшĕ вилсен Афиноген Иванович тăван килĕнчен амăшĕн арчисĕр пуçне урăх нимĕн те илсе тухман. Арчине те вăл калама çук пысăк реликви пулнă пирки çеç илнĕ.

1919 çулта, граждан вăрçи вăхăтĕнче, Афиноген Иванович ашшĕне Иван Кузьмина шуррисем çара илнĕ. Отряд хĕрлисемпе Етĕрне тăрăхĕнчех çапăçăва кĕнĕ. Шуррисен парăнма тивнĕ, отряд саланнă. Тавраари ялсенчен пуçтарнă салтаксем кайсан Иван Кузьмин та килне таврăннă. Тепĕр темиçе кунран шуррисен командирĕсем хăйсен салтакĕсене çĕнĕрен пуçтарнă, Ирçе ялне те пынă. Кил хуçи хĕрарăмĕ упăшкине – Иван Кузьмина – пушă арчана кĕртсе выртгарнă та çăрапа питĕрнĕ. Шурă офицерсем кил-çурта тĕплĕн ухтарнă, нимĕн тупаймасăр тухса кайнă. Çапла хăтăлса юлнă Афиноген Иванович ашшĕ. Граждан вăрçи хыççăн вăл мирлĕ ĕçе пуçăннă. Тепĕр сакăр çултан вĕсен килĕнче Арвунь ятлă ывăл çуралнă. Çавăнпа ашшĕне вилĕмрен хăтарса хăварнă амăшĕн арчине Афиноген Иванович ылтăн чăмăрккине упранă пек упрать. Утă уйăхĕн 10-мĕшĕнче талантлă писатель, пултаруллă литературовед 85 çул тултарчĕ. Вăл ĕçлеме пăрахман-ха, апла унăн малашлăх пур.

Кам вăл Алтакка Микули?

Кăçалхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнче чăвашсен паллă юптаруçи, прозаикĕ, врачĕ Николай Евдокимович Евдокимов çуралнăранпа 120 çул çитрĕ. Николай Евдокимов Самар тăрăхĕнчи хальхи Шунтал районне кĕрекен Çĕнĕ Таяпара хресчен кил-йышĕнче çуралса ӳснĕ. Ялта унăн ашшĕне Алтакка тесе чĕннĕ. Ывăлĕ те ача чухнех Алтакка Микули ят илнĕ. 1911 çулта вăл Саврăшри икĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă та Теччĕ хулинчи педагогика курсне кайса кĕнĕ. Сисĕнмесĕрех виçĕ çул иртсе кайнă, 1914 çулхи çурла уйăхĕнче тĕнче вăрçи пуçланнă. Теччĕре пĕлӳ пухнă Евдокимов Чĕмпĕре Иван Яковлев патне пил илме пынă. Яковлев ăна пил парса чăваш тăрăхне, хальхи Комсомольски районне кĕрекен Мăрат вулăсне, кăларса янă.

Ун чухне вулăсра 29 ял шутланнă. Вун саккăрăшĕнче шкулсем ĕçленĕ. Николай Евдокимова ачасене вĕрентме Хирти Шăхасана янă. Унти шкул 1912 çулта çеç уçăлнă, хăйĕн çурчĕ пулман. Земство шкулĕ Степан Акчурин патĕнче вырнаçнă. Малтанхи икĕ çул унта Елчĕк хутлăхĕнчи Элекçей Тимеш çынни Василий Федоров ĕçленĕ. Ăна 1914 çулхи авăн уйăхĕ пуçланиччен çара илнĕ. Авăнăн 1-мĕшĕ тĕлне Хирти Шăхасана Николай Евдокимов пырса çитнĕ. Ехрем Акчурин патне хваттере кĕнĕ. Кунта вăл çулталăк çурă ĕçленĕ. 1916 çул вĕçнелле ăна та вăрçа илсе кайнă.

Çак тапхăрта Евдокимов кӳршĕ ялсенчи икĕ учительпе çывăх паллашнă. Пĕри Ольга Цветкова, тепри Петр Крепков пулнă. Ольга Васильевна Шăхасантан икĕ çухрăмри Аслă Çĕрпӳел шкулĕнче ĕçленĕ. Вăл – Шăмăршă тăрăхĕнчи Палтиел хĕрĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă, Çĕрпӳелĕнче ĕçленĕ вăхăтра хăйсен ялĕнчи Вериалов офицера качча тухнă. Офицерăн чиркӳ канонĕсемпе хресчен хĕрĕпе пĕрлешме юраман. Ольга Цветкова Вериаловпа венчете тăрайман.

Офицера вăрçа илсе кайнă. Цветкова мăшăрĕнчен йывăр çын пулса юлнă. 1915 çул вĕçĕнче Аслă Çĕрпӳелне Пăваран уесри земство представителĕ персе çитнĕ, тӳрех шкула çул тытнă, йĕркене пăсса офицера качча тухнăшăн Ольга Васильевнăна учительтен кăларни çинчен пĕлтернĕ. Ольга Цветковăна (Вериаловăна), вăл йывăр çын пулнине пăхмасăрах, шкултан та, Аслă Çĕрпӳелĕнчен те кăларса янă. Инкек çакăнпа çеç пĕтмен. Чылай вăхăт иртсен Ольга Васильевна хăйĕн упăшки вăрçăра пуç хуни пирки хыпар илнĕ.

Патша пусмăрĕнче хур курнă Ольга Цветкова иртнĕ ĕмĕрĕн çирĕммĕш-вăтăрмĕш çулĕсенче çеç ирĕке тухнине туйса илнĕ, Чăваш Енре хĕрарăмсен юхăмĕн паллă çынни пулса тăнă. Патăрьел, Шăмăршă, Йĕпреç районĕсен, республикăн влаç тытăмĕсенче ĕçленĕ, Уруковпа пĕрлешсе çемье çавăрнă, пилĕк ача çуратса ӳстернĕ, анчах сывлăхĕ хавшанипе 1936 çулта çĕре кĕнĕ.

Шупашкарта Уруков урамĕ пур. Çак урама Ольга Васильевнăн упăшкин ячĕпе мар, ывăлĕн ячĕпе панă. Виталий Иванович Уруков Тăван çĕр-шыв Аслă вăрçинче паттăрлăх кăтартнă, Совет Союзĕн Геройĕ пулса тăнă.

Петр Егорович Крепков – Çĕпрел хутлăхĕнчи Кивĕ Тăван ял çынни. Çамрăклах вăл Хурăнвар Шăхальти икĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă, тĕнче вăрçи пуçланиччен Чĕмпĕрти гимназире экзамен тытса учитель ятне илнĕ, чăваш тăрăхне çитсе хальхи Патăрьел районне кĕрекен Ишлĕ Шетмĕ шкулĕнче ĕçленĕ, кайран Шетмĕрен çирĕм пилĕк çухрăмри Катек ялне куçнă. Катек Хирти Шăхасантан инçе мар вырнаçнă. Петр Крепков, Ыхра Çырми ялĕнчи тутар шкулĕн учителĕ Кадыр Апанаев тата Аслă Çĕрпӳел ялĕн учительници Ольга Цветкова Хирти Шăхасанта Николай Евдокимов патĕнче час-часах пулнă. Вĕсем халăх хушшине тухса калаçусем ирттернĕ, çынсене вăрçă çинчен ăнлантарса панă.

Учительсем ялти хурал пӳртне те кĕрсе тухнă. Шăхасанта пĕр чӳречеллĕ, улăм витнĕ хура хурал пӳрчĕ

хĕсĕнсе ларнă. Ăна Йăвашкел ялĕн çынни, Элекçей ятлăскер, хутса ăшăтса, çӳп-çапран тасатса тăнă. Вăрçă пуçланнă синкерлĕ çул хурал пӳртне çын нумай пынă. Вĕсемпе калаçма, лару-тăру пирки ăнлантарса пама ансат пулнă.

1915 çул пуçламăшĕнче Крепковăн та вăрçа тухса кайма тивнĕ. Паллана учительсемпе сыв пуллашнă. Вăрçăра Крепков Кавказ фронтне лекнĕ, Тифлис (хальхи Тбилиси) хулинче прапорщиксен шкулĕнче вĕреннĕ, 118-мĕш çар полкĕнче службăра тăнă. Кунта революци шухăш-кăмăллă çынсемпе çыхăннă. 1917 çул вĕçĕнче çĕнĕ влаç майлă çаврăнса ӳкнĕ. 1918 çулта хăй унччен ĕçленĕ Татмăш тăрăхне пырса çитнĕ. Шуррисемпе пыракан тан мар çапăçура çав çулхи çурлан 28-мĕшĕнче вилнĕ. Ку ĕç Кĕçĕн Патăрьел, Çĕнĕ Катек, Ыхра Çырми, Чăваш Ишек ялĕсен çывăхĕнче иртнĕ.

Алтакки Микули – Николай Евдокимович Евдокимов–Хирти Шăхасан шкулĕнче 1915 çулхи кĕркуннеччен ĕçленĕ. Ял çыннисем ăна кĕске вăхăтрах юратса пăрахнă, хисепленĕ. Вăл вăхăтра Шăхасан таврашĕнче виçĕ чиркӳ (Аслă Çĕрпӳелĕнче, Кĕçĕн Çĕрпӳелĕнче, Хирти Мăнтăрта) пулнă. Шăхасан Хирти Мăнтăрти чиркӳ прихутне кĕнĕ. Ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче Шăхасан çыннин Василий Степановăн арăмĕ Перяскева Матвеевна хĕр çуратнă, ăна Хирти Мăнтăр чиркĕвĕнче тĕне кĕртнĕ, пепкен хреснашшĕ Николай Евдокимов пулнă. Хĕр ачана Александра ят хураççĕ.

1916 çулхи юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче Николай Евдокимова фронта илнĕ. Вăрçăран нарăс революцихыççăн та тӳрех киле таврăнайман-ха. 1918 çул пуçламăшĕнче вăл Çĕнĕ Таяпана çитнĕ, ял хуçалăх ĕçĕсене хутшăннă: 1919 çулхи кĕркунне Хусан университечĕн медицина факультетне вĕренме кĕнĕ. Унта унăн нумай вăхăт вĕренме май килмен, Хĕрлĕ Çар ретне тăнă, çапăçусене хутшăннă, агитаци ĕçне туса пынă, хут пĕлмен салтаксене вĕрентме кружоксем йĕркеленĕ. Граждан вăрçи

вĕçленнĕ-вĕçленменех Н.Евдокимов университета тавраннă, çине тăрсах вĕренме пуçланă, 1925 çулта диплом илнĕ. 1930 çулччен вăл çак хулари врачсен пĕлĕвне ӳстерекен институт клиникинче ĕçленĕ.

Вăтăрмĕш çулсенчен пуçласа унăн пĕтĕм пурнăçĕ чăваш тăрăхĕпе çыхăннă. 1930–1936 çулсенче Шупашкар хула больницинче акушерипе гинекологи уйрăмне ертсе пынă. 1936 çулта Канаш хула больницине куçарнă.

Литература ĕçне Николай Евдокимов вăтăртан иртсен, 1925 çулта, пуçаннă. 1926–1928 çулсенче хĕрĕх ытла юптару çырнă. Хайлавĕсем «Канаш» хаçатра, «Капкăн», «Сунтал» журналсенче пичетленнĕ. Вĕсенчен хăшне-пĕрне автор Алтакка Микули псевдонимпа кăларнă. Юптарусенче Н.Евдокимов пурнăçра кашни утăмрах тĕл пулакан сĕмсĕрсене, кахалсене, хапсăнчăксене, ĕçлемесĕр çиме юратакансене питленĕ, вĕсенчен çивĕччĕн тăрăхласа кулнă. «Якурпа Януш», «Микитапа Марине», «Ачипе амăшĕ», «Лашапа завхоз», «Равноправи», «Супăнь хăмпи», «Акахвунпа кăрмахвун», «Чĕлĕм», «Сĕмсĕр сысна» тата ытти те унăн пултарулăхĕнче паллă вырăн йышăнаççĕ. Писателĕн малтанхи юптарăвĕсем «Хĕрлĕ сăнă» (1929 ç.) кĕнекере пичетленнĕ. 1936 çулта вăл «Юптарусем» ятпа тепĕр кĕнеке кăларнă.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине Николай Евдокимович çар врачĕ пулса хутшăннă, анчах унăн вăрçăри шăпи инкеклĕ пулса тухнă. 1941 çулхи юпа уйăхĕн вĕçĕнче фашистсен тыткăнне лекнĕ. Ăна концлагере ăсатнă. Çак тамăкра 1945 çулхи нарăс уйăхĕччен пулнă.

Вăрçăран таврăннă хыççăн Н.Евдокимов каллех Канаш хула больницине таврăннă. Литературăра проза жанрĕпе ĕçленĕ. Вунă-вун икĕ çул хушшинче пĕр роман тата пĕр повеç çырса пĕтернĕ. «Çулсем-йĕрсем» романĕ 1962 çулта пичетленсе тухнă.

Н.Евдокимов тусне Петр Крепкова та манман. Хăйĕн пурнăçĕн юлашки тапхăрне шăпах ăна халалла-

нă, çине тăрсах, хавшанă сывлăхĕ чăрмантарнине пăхмасăрах, ун çинчен повеç хайланă. Вăл çапăнса тухиччен, 1964 çулхи утă уйăхĕн 16-мĕшĕнче, Н.Евдокимовăн чĕри тапма чарăннă. Ăна Канаш хулин масарĕнче пытарнă. Тыткăнра пулнине шута илсе Николай Евдокимов писателе «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ» ята та вăл çитмĕл тултарсан çеç, виличчен пĕр çул маларах, панă, унăн биографине биобиблиографи справочникĕсене кĕртмесĕр хăварнă. Апла пулин те вăл халăх асĕнче. Паян кун та литературăна юратакансем унăн çĕтĕлсе таткаланнă кĕнекисене тупа-тупа вулаççĕ.

Якур Иванч

Асаттен шăллĕне Якур Иванча хамăн пурнăçăмра эпĕ пĕрре те курман. Эпĕ вăрçă пĕтнĕ çулхи кĕркунне çуралнă, вăл вăрçă вăхăтĕнче Улатăр тĕрминче вилнĕ. Ун çинчен мана аттепе пĕр тăван тетесен арăмĕсем, асанне, Якур Иванчăн иккĕмĕш арăмĕ Ухвине, кӳршĕ карчăкĕсем нумай каласа панă.

Мăраткасси текен урамра пирĕн çурт тĕп кил шутланнă. Асаттен ашшĕн Ваньккан икĕ ывăл пулнă, пĕрне Кĕркури, тепĕрне Якур тесе чĕннĕ. Асли – Кĕркури – йĕркеллĕ йĕкĕт пулса ӳснĕ, ĕçлеме юратнă, шӳт тума ăнкарнине тĕпе хурса юлташĕсен хушшинче ăна Шӳт Кĕркури ят панă.

Якур тулăксăр ача пулнă, ялта икĕ çул вĕреннĕ хыççăн шкула çӳреме пăрахнă, улахсенче хĕрсене йĕртнĕ, тантăшĕсемпе пĕр вĕçĕмсĕр çапăçнă. Çавна пулах вăл вун саккăр тултаричченех тĕрмене лекнĕ.

Виçĕ çултан унтан тухнă, яла майра ертсе килнĕ. Майри хăй йывăр çын пулнине те пытарман. Ку ĕç – иртнĕ ĕмĕрĕн çирĕммĕш çулĕсен пуçламăшĕнче... Хĕрĕхе çывхарса пыракан Кĕркурипе Малютăн (манăн асанне) çемьере виçĕ ывăлпа пĕр хĕр çитĕннĕ ĕнтĕ. Кил пуçĕ Ванькка та сывах пулнă-ха.

Якур кил-йышра хăй хуçа пулма шут тытни çинчен ашшĕне пĕлтернĕ. Ашшĕ те, Кĕркурипе арăмĕ те çакна хирĕç паллах. Ку тапхăрта Кĕркури тĕп килте çĕнĕ çурт лартнă, хуралтă çавăрнă. Ашшĕпе тетĕшĕ кĕске вăхăтра Якура çурт лартса панă (шкул общежитийĕ пулнă вырăнта), çĕнĕ пӳртре пурăнма (вăл вăхăтра Якурăн хĕр çуралнă) уйăрса кăларнă.

Чăваш ялĕнче нихăçан та çынна вырăссем пек ячĕпе тата ашшĕ ячĕпе чĕнмен. Чăваш йăлипе тĕрлĕрен ят панă: Ехвин Иванĕ, Куçка Тимĕркки, Çĕвĕç Эрхип, Тарас Тимушĕ, Тихăн Мĕтрийĕ, Михала Ваççили, Унюк Мишши, Хаххул Макарĕ...

Якур тĕрмерен таврăнсан та куштанланма пăрахман. Пĕррехинче çынсене хурал пӳртне пухса хăйне малашне Якур Иванч тесе чĕнме хушнă, итлемесен хĕнессипе, çурт-йĕре çунтарса ярассипе, выльăх-чĕрлĕхе вĕлерессипе хăратнă. Ялти учителе Георгий Тарасович Печникова ахаль чухне Тарас Якурĕ тесе чĕнекен ял çыннисем Уткин Якура Егор Иванч тесе чĕнме пуçланă. Хĕрĕхмĕш çулсенче Иван Егорч Андреева, Ехвин Егорч Павлова, Ехвин Якăльч Портушкина çакăн манерлĕ чĕнме пуçличченех Якур Иванч вырăсла ятпа çӳренĕ.

Вунă-вун икĕ çул хушшинче Якур Иванч майри, вырăс хĕрарăмĕ, виçĕ хĕр çуратса панă. Ачисем пĕр пичĕ хĕвел те тепĕр пичĕ уйăх тенĕ пек питĕ хитре пулнă.

Пурăнмалла та пурăнмалла пек те, анчах чурăс çыннăн инкекĕ хăйĕнчен таçта малта пырать-çке-ха. Пĕррехинче, вăтаçĕр Сăпас кунĕнче, Якур Иванч арăмне ĕне витине валашкана тепĕр вырăна куçарма чĕнсе кĕнĕ. Валашкана иккĕшĕ икĕ вĕçĕнчен йăтса вырăнтан хускатнă. Йывăр çăк арăмĕн аллинчен вĕçерĕнсе çĕре ӳкнĕ. Ĕç ăнманнине кура Якур Иванч тарăхса кайнă. Инкеке, вите кĕтессинче вутă çурмалли тукмак выртнăмĕн. Ăнран тухса кайнă Якур Иванч тукмака ярса илнĕ те арăмне пуçĕнчен хаплаттарнă. Хĕрарăм самантрах вилсе выртнă.

Якур Иванча суд тунă, иккĕмĕш хут нумай çуллăха тĕрмене хупнă. Хĕрĕсене таврари ял çыннисем усрава илнĕ.

Темиçе çултан Якур Иванч яла каллех таврăннă. Чылай вăхăт килте пĕччен пурăннă. Ялти тăлăх хĕрсемпе хĕрарăмсем асар-писер çилĕллĕ çынна качча тухма килĕшмен. Якур арăм шырама ют ялсене те çӳренĕ, анчах усси пулман. Пилĕк-ултă çул Якур Иванч пĕччченех пурăннă. Ĕне, сурăх, сысна, чăх-чĕп усранă. Асанне каланă тăрăх – вăл сыснана хытă шăнтсан анчах пуснă. Шăртне çунтармасăр, вĕри шывпа ислетмесĕр мачча çинчи чи çӳлти каштаран çакса янă, вунă кун ытла

шăнтнă. Ун хыççăн хырăмне касса уçса пырши-пакартине, ăшĕ-чиккине кăларнă, пӳртре ăшăтса, çуса тасатса апат туса çинĕ. Ун хыççăн шăннă сысна тушкин тирне сӳнĕ, какайне ăшăтса çуса тасатнă, вакласа яшкана янă. Пĕрремĕш кун какайне шăмăран уйăрса çинĕ, иккĕмĕшĕнче шăммине вĕретсе яшка пĕçернĕ. Виçĕтăватă пăтлă сысна Якур Иванча Мăнкун ирттерме те çитнĕ.

Таврари ялсенчен пĕринче Ухвине Шорникова текен хĕрарăм тăватă ачипе тăлăха юлнă. Аслă ачи вун пĕр çулта, кĕçĕнни кăкăр та пăрахман-ха. Ухвинепе ачисем выçă ларнă. Инкеклĕ çав кунсенче вĕсен килне Якур Иванч пырса кĕнĕ, Ухвинене хăйне качча тухма ӳкĕтленĕ. Ачисене çăлса хăварас йӳтĕмпе вăл унăн арăмĕ пулма килĕшнĕ. Шорниковсем выçă вилесрен хăтăлса юлнă.

Якур Иванчăн алли кукăр пулнă, вăл май килнĕ чухне начар выртакан япалана хĕстерсе илме, вăрлама юратнă.

Тукай ялĕн çыннисем Якур Иванч килĕнче пурăнакан вĕтĕр-шакăра майĕпенех Якур Иванч ачисем теме пуçланă. 1941 çулхи çулла вăрçă пуçланнă. Ялти ик çĕр ытла çын вăрçа тухса кайнă. Виçĕ ачине киле хăварса Максимов Çеркей те фронта лекнĕ. Унăн арăмĕ, ялта Хитре Санюк ятпа çӳрекенскер, икĕ ывăлĕпе тата хĕрĕпе выççа тăрса юлнă. Вăрçăччен Çеркейпе Санюк Хыçалти касра лайăх кил-çурт çавăрма ĕлкĕрнĕ. Малти касри пăралук хĕрринче хăлтăр-халтăр çуртра Шорников ачисемпе тата Ухвинепе пурăнакан Якур Иванч Хитре Санюка çурт улăштарма сĕннĕ, уншăн вунă пăт ыраш пама пулнă. Ачисен пурнăçне çăлса хăварас ĕмĕтпе пурăнакан Санюк килĕшнĕ. Тĕлĕнсе каймалла! Тĕнче усалĕ Якур Иванч Шорникова Ухвинен тăватă ачине, Максимова Санюкăн виçĕ ачине хăйĕн ĕмĕтсĕрлĕхĕпе вилĕмрен çăлса хăварнă.

Çав çулах (1942 çул) Якур Иванч хитре Санюк çуртĕнче, Санюкĕ ачисемпе Якур Иванч çуртĕнче пу-

рăнма пуçланă. Якур Иванчăн алли епле кукăр пулнă, çаплипех юлнă. Йĕрке хуралçисем ăна часах хуптĕрлесе тытнă. Суд пулнă. Якур Иванча тĕрме кирпĕчне шутлама Улатăра ăсатнă. Суд залĕнчен илсе тухнă чухне Якур Иванч хăйĕн тетĕшне Кĕркурие çапла каласа хăварнă: «Ас туса тăр, Кĕркури, тĕрмерен эпĕ санран пуянрах таврăнатăп». Якур Иванча хупнă хыççăн икĕ уйăхран Ухвине ывăл ача çуратса панă. Ку, чăнах та, Якур Иванч ывăлĕ пулнă. Ăна Шуркка ят хураççĕ. Шурккана, манран виçĕ çул аслăрахскере, эпĕ лайăх ас тăватăп. Вăл илемлĕ пит-куçлă, шуранка сăнлă ачаччĕ. Шкулта лайăх вĕренетчĕ, çиччĕ пĕтерсе тухсанах тахăш хулари професси училищине кĕчĕ. Унăн малаллахи пурнăçĕ еплерех çул-йĕрпе кайнине пĕлместĕп.

Пуйма кайнă Якур Иванч тĕрмерен таврăнайман. Кирпĕч шутлакансене çăкăр сахал çитернĕ, хытă ĕçлеттернĕ. Пуйса таврăнма ĕмĕтленекен этем çав çăкăра та сутма тытăннă, хăй йӳçĕтнĕ купăста шӳрпи ĕçнипе пурăнма тĕв тунă. Чăвашсен пуйма каякан вилсе килнĕ тенĕ сăмахĕ тĕрĕсех çав.

Ухвине инке Шорниковран çуратнă ачисене те, Якур Иванч пепкине Шуркка та чăтма çук хĕнпе, тӳсме çук асаппа ӳстернĕ. Çунаттисем кăшт çеç çирĕпленсенех вĕсем тĕнчене тухса кайнă. Ялта Ухвине инкен аслă ывăлĕ Ваççа çеç тăрса юлнă. Вăл авланнă, ялти хĕрех качча илнĕ, Шорников хушаматпа, Якур Иванч Ваççи ятпа çӳресе ĕмĕрне ĕмĕрленĕ. Халь вăл пирĕн хушăмăрта çук ĕнтĕ. Ваççапа мăшăрĕ пилĕк-ултă ача çуратса пăхса ӳстерчĕç. Ачисем сывлăхлă, ĕçчен, ырă кăмăллă çитĕнчĕç. Аслă хĕрĕ Йĕпреçри типографире вăтăр çула яхăн ĕçлесе пенсие тухнă. Кĕçĕн ывăлĕ Тукай хĕрнех качча илчĕ, Комсомольскинче кил-çуртлă пулчĕç, Тукайри килне те арканма памаççĕ, Якур Иванч Ваççин ачипе кинĕ ятпа пурăнаççĕ.

Тупмалли

Татăклă сăмах 3
Çын çĕр çинчех çуралать 9
Сăнĕпе те, чунĕпе те çамрăк 14
Амăшĕн арчи 17
Кам вăл Алтакка Микули? 22
Якур Иванч.....27

Геннадий Алексеевич Уткин

УЛТĂ ПОРТРЕТ

Издается в авторской редакции

Верстка Воробьевой О.В.
Дизайн Лукиной Н.Л.

Подписано в печать 27.09.2013.
Формат 60x84/16. Бумага офсетная.
Печать оперативная. Гарнитура Таймс.
Физ. печ. л. 1,62. Тираж 100 экз. Заказ № К-335.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 323-352, 412-798. E-mail: newtime1@mail.ru.

३७.७